27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
26
ЫТЛАРИКУН
252(6747) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне ТОЛБУХИНА
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-лейтенанта ИВАНОВА

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем БУДАПЕШТ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, виçĕ кун хушши наступлени туса пырса, 40 километр таран малалла кайнă.

Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем СЕКЕШФЕХЕРВАР тата БИЧКЕ хулисене—çулйĕрсен пысăк узелĕсене тата тăшман оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене—штурмласа туртса илнĕ. Çапла, фронт çарĕсем нимĕçсемпе венгерсен çарĕсен БУДАПЕШТ патĕнчи группировкин хĕвеланăçнелле чакмалли тĕп çулĕсене татса пăрахнă.

Тăшман оборонине татассишĕн тата СЕКЕШФЕХЕРВАР хулипе БИЧКЕ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: арми генералĕн ЗАХАРОВĂН, ШЛЕМИН генерал-лейтенантăн, ДЕРЕВЯНКО генерал-майорăн, БИРМАН генерал-майорăн, БИРЮКОВ генерал-майорăн, БОБРУК генерал-майорăн, ГНЕДИН генерал-майорăн, РУБАНЮК генерал-лейтенантăн, КОЛЧУК генерал-майорăн, ГРИГОРОВИЧ генерал-майорăн, АФОНИН генерал-майорăн, ЧИЖОВ полковникăн, ДРЫЧКИН полковникăн, БРАНСБУРК полковникăн, ПАРФЕНОВ полковникăн, КУКС полковникăн, ГОРБАЧЕВ генерал-майорăн, БУНЯШИН генерал-майорăн, ЦВЕТКОВ генерал-майорăн, МАРГЕЛОВ генерал-майорăн, КИНДЮХИН генерал-майорăн, БАЛДЫНОВ полковникăн, БУРИК полковникăн, ДУНАЕВ полковникăн, КАРАМЫШЕВ генерал-майорăн, САРАЕВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн НЕДЕЛИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ЦИКАЛОН, артиллери генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕНКĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ВОЗНЮКĂН, артиллери генерал-майорĕн РАТОВĂН, артиллери генерал-майорĕн БОБРОВНИКОВĂН, МИХАЙЛОВ полковникăн, ТРЕХНОВ полковникăн, СЛЕПАКОВ полковникăн, ЛУПАКОВ полковникăн, БОРИСЕНКО полковникăн, ТАРАСЕНКО полковникăн, РОМАНОВ полковникăн, ГРАЖДАНКИН полковникăн, ЛЕОНОВ полковникăн, КОРОВИН подполковникăн, ОЛЕЙНИК подполковникăн, ЧЕПУРИН подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СУХОРУЧКИНĂН, РУМЯНЦЕВ полковникăн, СВИРИДОВ генерал-лейтенантăн, ГОВОРУНЕНКО генерал-майорăн, ОГНЕВ полковникăн, ГОРДЕЕВ подполковникăн, РОГАЧЕВ подполковникăн, ГАЕВСКИЙ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦĂН, авиаци генерал-майорĕн КОРСАКОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТОЛСТИКОВĂН, ИВАНОВ полковникăн, СМИРНОВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн ТИШЕНКОН, ТЕРЕХОВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн КОТЛЯРĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ИГНАТОВĂН, ПАВЛОВ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн МОРОЗОВĂН, ЕГОРОВ полковникăн, КАТКОВ полковникăн связисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, тăшман оборонине татассишĕн тата СЕКЕШФЕХЕРВАР хулипе БИЧКЕ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсисене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, декабрĕн 24-мĕшĕнче, 20 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, тăшман оборонине татса СЕКЕШФЕХЕРВАР хулипе БИЧКЕ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, тăшман оборонине татассишĕн тата СЕКЕШФЕХЕРВАР хулипе БИЧКЕ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, пурнĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 23-мĕшĕнче Венгрире пирĕн çарсем ДЬЕНДЬЕШ хулинчен çурçĕртерехре сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче малалла наступлени туса пынă. КРИШШИКАТОР, САЛАЙКА, ИШТЕН-МЕЗЕИЕ, ВАРАСО, ЕРДЕКЕВЕШД, ИВЕД, НАДУЙФАЛУ, КАЗАР, ВИЖЛАШ, ПУСТА КРАКО, ТОТ-МАРОКХАЗА ялĕсене туртса илнĕ. ДЬЕНДЬЕШ хулинчен çурçĕртерехре декабрĕн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 1.050 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем вăйлă çапăçнă хыççăн Чехословакири ШАХЫ хулипе ДУНАЙ шывĕ хушшинчи сăртлă-вăрманлă район урлă каçнă та ИПЕЛЬ шывĕ çине тухнă, БЕРНЕЦЕ, НАДЬБЕРЖЕНЬ, КОШПАЛЛАГ, ИПОЛИТЕЛДЬЕШ, ЛЕТКЕШ, ЛЕЛЕДХИЛИ, МАРИА, НОСТРА, СОБ, ЗЕБЕГЕНЬ, НАДЬ МАРОШ ялĕсене тата НАДЬ МАРОШ, ЗЕБЕГЕНЬ чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. ШАХЫ хулинчен хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем тăшманăн пысăк танковăй соединенийĕсен контратакисене ăнăçлăн сирсе янă, гитлеровецсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр çухатусем кўнĕ.

БУДАПЕШТ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре СЕКЕШФЕХЕРВАР хули районĕнче пирĕн çарсем наступлени пуçласа ярса тăшманăн пысăк пехотнăй тата танковăй соединенийĕсемпе хытă çапăçма пуçланă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çўренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Декабрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 107 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 59 самолетне персе ўкернĕ.

ДЕКАБРĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 24-мĕшĕнче Венгрире пирĕн çарсем ДЬЕНДЬЕШ хулинчен çурçĕртерехре СИЛАКСО, ДОМАХАЗА, СЕДЕРКЕНЬ, МАТРА-НОВАК, ХОМОК-ТЕРЕНЕ, МАТРА-СЕЛЕ, КОЛИХАЗА, КИШФАЛУД ялĕсене тата ХОМОК-ТЕРЕНЕ чугун çул станцине туртса илнĕ. Ку районра декабрĕн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 1.430 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Чехословаки çĕрĕнче пирĕн çарсем ШАХЫ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ЛЕВИЦЕ хулипе узловой чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ПЛАШТОВЦЕ, МОРАВЦЕ, НАДОШАНИ ЖЕМБЕРОВЦЕ, ГУРША, КОШКАНИ, МЫТНЕ ЛУДАНЫ, ЖЕМЛЯРИ, ГОНТ ДЯРМОТКИ, ОРОС, ВЕЛИКИЙ ПЕСЕК, АГОТА, ДЕМАНДИЦЕ, САЗДИЦЕ, ТОМПА, ПРЕСЕЛАНИ ятлă пысăк ялсем тата ТОМПА, СЛАТИНА чугун çул станцийĕсем. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем ШАХЫ хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшманăн пысăк танковăй соединенийĕсен контратакисене ăнăçлăн сире-сире янă, гитлеровецсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кўнĕ.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем БУДАПЕШТ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, виçĕ кун хушши наступлени туса пырса, 40 километр таран малалла кайнă.

Çаз наступленире фронт çарĕсем СЕКЕШФЕХЕРВАР тата БИЧКЕ хулисене — çулйĕрсен пысăк узелĕсене тата тăшман оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене — штурмласа туртса илнĕ. Çапла, фронт çарĕсем нимĕçсемпе венгерсен çарĕсен БУДАПЕШТ патĕнчи группировкин хĕвеланăçнелле чакмалли тĕп çулĕсене татса пăрахнă. Фронт çарĕсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 160 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—МАРТОН-БАШАР, ПАЗМАНД, ЛОВАШБЕРЕНЬ, ПАТКА, ПАКОЗД, САБАД-ФАЛУ-БАТЬЯН, УРХИДА, ТАЦ, ФЮЛЕ, ТАРНОК, УЙФАЛУ, ВАЛЬ, ВЕРТЕШАЧА, ШОШКУТ, ЕТЬЕК, ТАБАЙД, ФЕЛЧУТ, ВЕРТЕШБОГЛАР, БОДМЕР, ВЕРТЕШКОЗМА, ТОРБАДЬ, ОСАРОК, СААР ятлă пысăк ялсем тата САБАД-БАТЬЯН, ЧАЛА, ПАТКА ЛОВАШБЕРЕНЬ, ВЕРТЕШАЧА, ВЕРТЕШБОГЛАР, АЛЧУТ-ФЕЛЧУТ, ХЕРУЕГХАЛОМ, ТОРБАДЬ чугун çул станцийĕсем.

Декабрĕн 21-мĕшĕпе 23-мĕшĕ хушшинче наступлени туса пынă вăхăтра УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем БУДАПЕШТ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсемпе венгерсен 3.200 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çўренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Декабрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 177 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 58 самолетне персе ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире пирĕн çарсем Шахы хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре малалла куçса пынă. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, совет чăçĕсем Левице хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти чылай пунктсене йышăннă. Тăшман Шахы хулинчен хĕвеланăçнерехре танксен пысăк вăйĕсене пухнă та пирĕн çарсем малалла каяссине чарса лартма хăтланнă. Нимĕçсем темиçе хутчен те контратакăна кĕре-кĕре кайнă, пирĕн танкистсем, артиллеристсем тата пехотинецсем гитлеровецсен контратакисене пурне те ăнăçлăн сире-сире янă, тăшмана пысăк çухатусем кўнĕ. Пĕр районри стрелковăй чăçăн боецĕсем тăшман ушкăнне çавăрса илнĕ. Çав çапăçура 500 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, 300 çынна ытла тыткăна илнĕ. Тепĕр районра пирĕн подразделенисем венгерсен пехотин батальонĕ çирĕпленсе ларнă яла атакăланă. Каç пулса килнĕ тĕлелле çав батальонăн юлашкийĕсем 190 çын хăйсен командирĕпе тата штабĕпе пĕрлех тыткăна парăннă.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем Будапешт хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени пуçласа янă. Тăшман ку участокри оборонăна нумайччен тытса тăма хатĕрленнĕ. Юлашки вăхăтра нимĕçсем унта йышлă танксем, темиçе бригада штурмовой тупăсем, йышлă артиллери тата пехотăн пысăк вăйĕсене илсе пынă. Пирĕн çарсем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, виçĕ кун хушши наступлени туса пырса, 40 километр таран малалла кайнă. Наступление артиллерипе авиаци пуçласа янă, вĕсем тăшман позицийĕсене вăйлăн пенĕ. Пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем нимĕçсен оборона сооруженийĕсене пĕр сехет хушши арканă. Совет авиацийĕ, начар çанталăк тăнине пăхмасăрах, тăшман çине бомбăсем нумай тăкнă. Çав вут хумĕ хыççăн совет пехотинецĕсем атакăна кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем наступленин малтанхи кунĕнчех нимĕç укрепленийĕсен малти линине туртса илнĕ, тăшманпа унăн оборонин ăшĕнче çапăçма тытăннă.

Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем тăшманăн оборона районĕн тултипе шалти укрепленийĕсене татнă та Секешфехервар хулине вăркăнса кĕрсе кайнă. Гитлеровецсем чул çуртсене кĕрсе ларса, çав тери хаяррăн хирĕç тăнă. Совет боецĕсем тăшмантан çурт хыççăн çурт, урам хыççăн урам тасатса пынă. Урамсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсен гарнизонне аркатса тăкнă та Венгрин промышленноçпа чугун çулсен пысăк центрĕ пулса тăракан Секешфехервар хулине штурмласа туртса илнĕ.

Беленце хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăшман, совет çарĕсен наступленине чарса лартма шутласа, васкасах пĕр танковăй дивизи илсе пынă та ăна çул çинчех çапăçăва кĕртсе янă. Танксен хаяр çапăçăвĕ пуçланса кайнă. Пирĕн çарсем нимĕçсем хытă хирĕç тăнине сирсе янă та паян, çаз тери хăвăрт пырса çапса, Бичке хулине туртса илнĕ. Çапла вара пирĕн çарсем Венгри столицине—Будапешт хулине—Австрипе çыхса тăракан тĕп чугун çулсемпе шоссе çулĕсене татнă. Çавна пула пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен çарĕсен Будапешт патĕнчи группировкин хĕвеланăçнелле чакмалли тĕп çулĕсене татнă. Унти наступленире фронт çарĕсем халăх пурăнакан ытти 160 пункта ытла йышăннă, вăл шутра Будапешт хулинчен 12 километр хĕвеланăçнерехре ларакан Торбадь ялĕпе чугун çул станцине туртса илнĕ.

Будапешт хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри çапăçусенче тăшман питĕ пысăк çухатусем тўсет. Пĕр çак юлашки кун хушшинче кăна пирĕн çарсем нимĕçсен 130 танкĕпе хăй тĕллĕн çўрекен туппине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Секешфехер-

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра).

Узбек ССР Верховный Совет Президиумне
Узбек ССР Халăх Комиссарĕсен Советне
Узбекистанри Коммунистсен Партин Центральный Комитетне

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Узбекистанри рабочисемпе колхозниксене тата интеллигенцие Узбексен Советлă Социализмлă Республикине тунăранпа 20 çул тултарнă кун тăванла салам калаççĕ.

Совет революцийĕ Узбекистан ĕççыннийĕсене эмирсен, байсен, патша чиновникĕсен пусмăрĕнчен хăтарчĕ, узбексен нациллĕ государственноçне туса хучĕ, узбек халăхне нумай национальлĕ хăватлă Совет государствин ытти халăхĕсемпе пĕрле никам аркатайми тăванла союза пĕрлештерчĕ, узбек халăхĕн хуçалăхĕпе культурине чечеклентерсе пыма çул уçса пачĕ.

Совет влаçĕн çулĕсенче узбек халăхĕ, аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, хуçалăхпа культурăлла пурнăçăн пур енĕсенче те пысăк çитĕнўсем турĕ. Елĕк вак хуçалăхлă, кая юлнă ялхуçалăхлă çĕршыв пулнăскер, халĕ Узбекистан механизациленĕ социализмлă шултăра ялхуçалăхĕн çĕршывĕ пулса тăчĕ. Узбекистанра уйхирсене шăвармалли хатĕрсен вăйлă системине туса хунă. Узбексен Советлă Республики пирĕн çĕршывра çĕрмамăк туса илмелли чи пысăк база пулса тăчĕ. Узбекистанра çĕнĕрен йывăр промышленность туса хунă.

Узбек халăхĕ культура енĕпе кая юлнине пĕтерчĕ. формипе национальлĕ, содержани енĕпе социализмлă малта пыракан культура чечекленсе ўсрĕ. Республикăра пурне те хут вĕрентес ĕçе пурнăçа кĕртнĕ, пиншер шкулсем, сиплекен учрежденисем, аслă вĕренў заведенийĕсем, театрсем, музейсем туса лартнă, наукăсен академине организациленĕ. Узбек халăхĕ хăйĕн хушшинчен ученăйсен, писательсен, искусство деятелĕсен, инженерсен, врачсен, учительсен, агрономсен нумай йышлă кадрĕсене вĕрентсе ўстерчĕ.

Совет Союзĕн фашистла Германие хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçи вăхăтĕнче Узбекистан ĕççыннийĕсем хăйсен Советлă Тăван çĕршывне чун-чĕререн парăнса тăнине тата уншăн тўрĕ кăмăлпа ĕçленине кăтартса пачĕç. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче узбек халăхĕн ывăлĕсем совет государствин чысĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн хăюллăн çапăçаççĕ. Узбексен Советлă Социализмлă Республикинчи рабочисем, колхозниксем тата интеллигентсем, фронта пулăшас тесе, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна çирĕппĕн шанса тăраççĕ: Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕрле, узбек халăхĕ тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне пурнăçа кĕртĕ тата фашистла нимĕç захватчикĕсене татăклăнах çапса аркатас ĕçе, Совет Союзĕн хуçалăхĕпе культурине малалла çĕклесе пырас ĕçе хăйĕн пĕтĕм вăйне парĕ.

Сывă пултăр Узбексен Советлă Социализмлă Республики!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ

ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçре Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилер!

Украина ССР-ĕнчи Сталино облаçĕнчи Старо-Бешевски МТС-ĕн тракторисчĕсем, рабочийĕсемпе служащийĕсем Совет Союзĕнчи МТС-семпе МТМ-сен тата ремонт завочĕсен мĕнпур работникĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Хамăрăн пĕтĕм аслă халăхпа пĕрле эпир халĕ хумханулла та асран кайми кунсене пурăнса ирттеретпĕр. Эпир ĕмĕтленсе кĕтнĕ вăхăт çитрĕ: паттăр Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсене хамăрăн Тăван çĕршыв çĕрĕ çинчен кăларса ывăтрĕ, халĕ Германи территорийĕнче ăнăçлăн çапăçса наступлени туса пырать, фашистла тискер кайăка унăн хăйĕн шăтăкĕнчех пыра-пыра çапать.

Сталин юлташ колхоз хресченĕсем пиркипе каланă сăмахсене эпир калама çук пысăк савăнăçпа итлерĕмĕр: «Хĕрлĕ Çар вăрçăн тăваттăмĕш çулĕнче, колхоз хресченĕсем тăрăшнине пула, апат-çимĕç çитменнине курмасть. Колхозниксемпе колхозницăсем—рабочисемпе интеллигенцие апат-çимĕç,—промышленноçа вара—чĕртавар парса тăраççĕ. фронт валли хĕçпăшалсемпе снаряжени туса кăларакан заводсемпе фабрикăсене йĕркеллĕ ĕçлеме май параççĕ. Пирĕн колхоз хресченĕсем, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне пĕтĕмĕшпех ăнланса тăрса, тăшмана çĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшаççĕ».

Пирĕн Старо-Бешевски МТС хамăрăн тăван вырăна ирĕке кăларнăранпа пĕр çул тултарнине нумаях та пулмасть паллă турĕ. Нимĕçсене хăваласа янă хыççăн малтанхи кунсенчех МТС коллективĕ хăйĕн станцине юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме тытăнчĕ. Лайăх йĕркелесе çитернĕ мастерскойсем çук пулин те тата запаслă пайсем çитмен пулин те, эпир иртнĕ çулта мĕнпур машинăсемпе тракторсене февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне—срокран 1 уйăх та 10 кун малтан юсаса пĕтертĕмĕр.

Ремонт пахалăхне государство комиссийĕ лайăх тесе йышăнчĕ. çакă вара кайран ĕçре çирĕпленчĕ: тракторсемпе ĕçлемелли плана эпир 170 процент тултартăмăр, кашни трактор пуçне вăтамран 555 гектар сухаларăмăр, 20 тонна ытла горючи перекетлесе хăвартăмăр. Уйрăм ĕçсем тăрăх эпир çакăн пек çитĕнўсем турăмăр: ир акмалли çуртыррисене 5 ĕçкунĕ хушшинче акса хăвартăмăр, тĕштырăсене 10 кун хушшинче пухса кĕртрĕмĕр. Эпир ĕçлекен колхозсем вăтам шутпа кашни гектартан 11 центнер тырă туса илчĕç. Натуроплата тыррине планпа пăхнинчен икĕ хута яхăн ытларах панă.

Килес çулта вăйлă тырпул туса илме эпир çирĕп никĕс хывса хăвартăмăр: кĕрхи тыррисене тракторсемпе сухаласа ирхи çĕртме тунă вырăна акрăмăр, вĕсене чи лайăх агротехникăллă срокра—сентябрĕн 15-мĕшĕнче—акса пĕтертĕмĕр. Кĕрхи çĕртме тумалли плана та тултартăмăр.

Пирĕн МТС-ра пĕтĕм çĕршывшăн паллă трактористка—СССР Верховный Совет депутачĕ Паша Ангелина ĕçлет. Унăн бригади кăçалхи çу вăхăтĕнче çулталăкри плана виçĕ хут ытла ирттерсе тултарчĕ, 15 лаша вăйлĕ кашни трактор пуçне 1.100 гектар ытла сухаларĕ тата 4211 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

1945 çул машинно-тракторнăй станцисем татах та лайăхрах ĕçлемелли çулталăк пулмалла. Çакна вара тракторсемпе машинăсене çураки валли вăхăтра юсаса хатĕрлени тата, пуринчен малтан, вĕсене лайăх, пĕр кăлтăксăр юсаса хатĕрлени татса парать.

Кăçал пирĕн МТС тракторсене юсас ĕçе вăхăтра хатĕрленсе тытăнчĕ. Кăçалхи декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне эпир тракторсем юсамалли IV-мĕш кварталти плана 120 процент тултартăмăр. Государство комиссийĕ, тракторсене тĕрĕслесе йышăнса, вĕсене лайăх юсанă тесе хак пачĕ.

МТС-семпе МТМ-сен тата ремонт завочĕсен мĕнпур работникĕсене эпир тракторсемпе ялхуçалăх машинисене вăхăтра тата ăнăçлăн юсаса хатĕрлессишĕн, вĕсене çураки валли лайăх хатĕрлесе çитерессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнсе калатпăр.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Старо-Бешевски МТС коллективĕ çакăн пек обязательствăсем илет:

1. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра тракторсемпе ялхуçалăх машинисем юсамалли плана 1945 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне—правительство кăтартса панă срокран 1 уйăх та 20 кун малтан пурнăçа кĕртмелле. Тракторсене государство комиссийĕ «отлично» хак парса йышăнмалла туса юсаса хатĕрлемелле.

2. Комбайнсен паркне 1945 çулхи майăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрлесе çитермелле.

3. Юсаса кăларнă пур двигательсене те, вĕсен хăватне тата горючи мĕн чухлĕ кайнине пĕлес шутпа, тĕрĕслў витĕр кăлармалла тата юсанă тракторсене пурне те ĕçлесе пăхса тĕрĕслемелле.

4. Ремонт ĕçĕсене лайăх организацилесе, юсанă çĕрте ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхне хăпартса тата вĕсен рационализаторла сĕнĕвĕсемпе пур майсемпе те усă курса, машинăсемпе тракторсене юсанин хакне 10 процент чакармалла.

5. Тракторсене, комбайнсене тата ялхуçалăх машинисене хĕллехи вăхăтра кăтартуллăн сыхласа усрас ĕçе организацилемелле. Çак шутпа, Ногински МТС примерĕ тăрăх, гаражсем, витнĕ сарайсем тата ытти производство çуртйĕрĕсем туса лартас ĕçе вăйлатмалла.

6. Пур трактор бригадисем валли те машинăсене техника енчен пăхса усрама кирлĕ инструментсемпе ытти хатĕрсен комплекчĕсене хĕллехи вăхăтра туса хатĕрлемелле Хире тухас умĕн кашни тракториста инструментсен уйрăм комплектне парса ямалла.

7. Колхозсем пулăшнипе çураки тĕлне пур трактор бригадисем валли те хирти станСем туса лартмалла, унта куçса çўрекен мастерскойсем тата нефть усрамалли витнĕ сарайсем пулмалла.

8. Нефть тавраш тытмалли пур кӗтка пичкесене те юсамалла тата трактор бригадисене çителĕклĕ чухлĕ пичкесемпе ытти хатĕрсем (витресем, насоссем варинкесем) памалла. Кашни трактор бригадинех заправка тумалли урапа памалла.

9. Куçса çўрекен мастерскойсем валли тракторсемпе ялхуçалăх машинисене хирте юсама кирлĕ инструментсемпе ытти хатĕрсене пĕтĕмĕшпех тупса памалла.

10. Уйхир ĕçĕсем пуçланиччен трактор бригадисен пур вагонĕсене те юсаса хатĕрлемелле.

11. Хĕл вăхăтĕнче çĕнĕ трактористсем кирлĕ таран вĕрентсе хатĕрлемелле тата трактористсем пулса ĕçленисене пурне те тепĕр хут вĕрентес ĕçе организацилемелле.

12. Лаша кўлсе ĕçлемелли мĕнпур хатĕрсене—плугсене, сеялкăсене, культиваторсене—вăхăтра юсаса хатĕрлеме колхозсене пулăшмалла.

Эпир машинно-тракторнăй станцисен мĕнпур тракторисчĕсене, комбайнерĕсене тата ытти работникĕсене тракторсем, комбайнсем, молотилкăсем тата кăкарса ĕçлемелли инвентарьсем юсамалли плана срокчен тата пысăк пахалăхпа тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва тухма чĕнетпĕр!

МТС-семпе колхозсенче хĕллехи вăхăтра машинăсене кăтартуллăн сыхласа усрассине организацилер!

Лашапа ĕçлемелли мĕнпур хатĕрсене хăвăрт та лайăх юсаса çитерме колхозсене пулăшар!

МТМ-семпе ремонт завочĕсен работникĕсем! Тракторсен моторĕсене юсамалли плана срокчен тата пысăк пахалăхпа пурнăçа кĕртер!

Машинăсене юсанă çĕрте ĕçлекен юлташсем! Машинăсемпе тракторсен паркне килес çураки валли лайăх хатĕрлесе çитерессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнăр!

Хамăрăн пĕтĕм вăя фронта пулăшма парар!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн тăван çулпуç, юратнă Сталин юлташ!

Чĕнсе калание Сталино облаçĕнчи Старо-Бешевски МТС работникĕсен пухăвĕнче сўтсе-явса йышăннă.

Чĕнсе калани çине çаксем алă пуснă:
МТС директорĕ—К. Ф. ЦИМИДАНОВ.
МТС-ри парторганизаци секретарĕ — К. С. ЧЕРНЕНКО.
Старши механик—М. З. КОСОВ.
Мастерской механикĕ—Н. И. ФЕДОРОВ.
Трактор бригадисен бригадирĕсем:
СССР Верховный Совет депутачĕ Паша АНГЕЛИНА,
Г. Д. ДАНИЛОВ, Я. Ю. ДМИТРИЕВ,
Ф. М. ЧЕЛПАНОВ.
Трактористсем—В. П. КОСТИНА.
Е. И. АНГЕЛИНА.
Токарьсем: З. С. СТАРИКОВА.
М. Я. ЗАГРЕБА.
Рабочком председателĕ — Ф. И. АНТОНОВ.
Слесарь-инструментальщик— Х. Г. ЛОГВИНОВ.
Электрослесарь—Н. И. ШАЛАШОВ
тата ыттисем те.

Совет Союзĕн Геройĕ Геннадий Габайдулин Шупашкарта пулчĕ

Пирĕн земляк, Совет Союзĕн Геройĕ Геннадий Габайдулин 1943 çулхи май уйăхĕнче Шупашкарта пулса, çамрăксемпе тĕл пулса калаçнăччĕ. Çав тĕлпулура вăл çамрăксене хăй епле çапăçни çинчен каласа пачĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç вăя шеллемесĕр çапăçма пулса, çамрăксем умĕнче тупа турĕ.

Çавăн хыççăн пирĕн земляк татах фронтра пулнă. Аna старши лейтенант званине панă. Ленинград фронтĕнче паттăррăн çапăçнăшăн ăна правительство Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă. Геройăн çамрăк кăкрийĕ çинче халĕ 2 орден тата икĕ медаль йăлкăшса тăраççĕ.

Геннадий Габайдулин çак кунсенче кĕске вăхăт хушши Шупашкарта пулчĕ. Унтан вăл хăй çуралнă Такаево ялне (Комсомольски район) кайрĕ. Унта пулнă хыççăн Габайдулин юлташ фронта тухса кайрĕ.

МУСКАВРА ХĔЛЛЕХИ СПОРТ СЕЗОНĔ УÇАЛНА

Декабрĕн 17-мĕшĕнче Мускавра анлă программăллă спорт ăмăртăвĕпе хĕллехи сезон уçăлнă. Мускав çыннисем, конькисемпе йĕлтĕрсем илсе, иртенпех стадионсене, парксене, хула хыçнелле кайма пуçланă. Сокольникире, Горький ячĕпе тăракан культурăпа кану паркĕнче тата «Динамо» стадионĕнче хоккей командисем выляна, йĕлтĕр эстафетисем пулнă, пăр çинче конькипе илемлĕн ярăнна, ташлана тата ытти те. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКАН ВĔÇĔ

вар хулинчен кăнтăртарахра пĕр аэродром-ра нимĕçсен юсавлă 54 истребительне тыт-са илнĕ. Нимĕçсенчен 19 паровоз тата 600 вагон ытла тытса илнĕ, вĕсенчен 100 ва-гонĕ боеприпаспа. Тăшманăн аркатса тăк-нă чаçĕсем каялла чакнă май хăйсен ар-тиллерине, боеприпасĕсене тата тĕрлĕрен çар пурлăхне пăраха-пăраха хăвараççĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ декабрĕн 22-мĕшĕнче нимĕçсен Либаво портĕнчи суднисем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахса штурмласа, тăшманăн икĕ транспортне тата хуралти икĕ карап-не шыва путарнă.

Виндава портĕнче флот летчикĕсем ни-мĕçсен 8.000 тонна таякан суднине шыва путарнă.

Львов облаçĕнче нимĕçсем тунă тискер ĕçсем çинчен

(Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тискер ĕçсем тунине тĕпчесе палăртакан Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтернинчен)

1941 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче Львов ху-лине пырса кĕрсен, нимĕç захватчикĕсем Львов облаçне «Галицин дисткрикчĕ» тесе ят панă та унта «çĕнĕ йĕрке» туса хунă: мирлĕ халăха çаратма, пусмăрлама, асап-лантарма тата персе вĕлерме пуçланă.

Çынсене вĕлерессине организацилекенни Германин рейхсминистрĕ Гиммлер пулнă. Вăл час-часах Львова пынă, унта кăтарту-сем панă, «çынсене вĕлермелли предприя-тисем» мĕнле ĕçленине тĕрĕсленĕ.

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси палăртнă тăрăх, Львов хулинче тата Львов облаçĕнче нимĕç захватчикĕсем со-вет çыннисене 700.000 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ. Вăл шутра арçынсем, хĕрарăмсем, ачасем, çавăн пекех тата Германири кон-центрациллĕ лагерьсенчен илсе пынă Че-хословаки, Югослави, Голланди, Велико-британи тата США гражданĕсем пулнă.

* * *

Львов хулине тытса иличченех гестапо отрячĕсен аллинче вĕлерме палăртса хунă интеллигентсен паллă представителĕсен списокĕсем пулнă. Вăл списоксене Германи правительстви хушнă тăрăх çырнă. Хулана пырса кĕрсенех вара массăллăн арестлеме тата пере-пере пăрахма пуçланă.

Этем тивĕçне таптаса варалас шутпа нимĕçсем арестленĕ ученăйсенчен тем тери мăшкăлласа кулнă, унтан вĕсене пере-пере пăрахнă. Львов хули çынни Б. О. Гольд-ман çапла каласа панă: эпĕ 1941 çулхи июль уйăхĕнче эсэсовецсем Артышевски урамри 8-мĕш номерлĕ çурта 20 çын илсе пынине куртăм. Вĕсем хушшинче тăватă профессорччĕ, адвокатсем тата врачсем пурччĕ. Гитлеровецсем вĕсене 4 хутлă çуртăн пусмисене чĕлхепе çулласа тасат-тарчĕç, унтан килкартинчи çÿп-çапа тута-па пухса пĕр çĕре хуртарчĕç. Çак ĕçсене туса пĕтерсен, гестаповецсем çав ушкăн-тан 5 çын суйласа илчĕç те хула хыçне илсе тухса персе пăрахрĕç, тенĕ.

Тĕпчесе палăртнă тăрăх, оккупациленĕ хыççăн пирвайхи уйăхсенчех нимĕçсем Львов хулинче наукăн, техникăн тата ис-кусствăн 70 ытла паллă деятельне арест-лесе персе вĕлернĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем мирлĕ халăха тата тыткăна лекнĕ совет çыннисе-не массăллăн вĕлерсе пынă.

1941 çулхи ноябрь уйăхĕнче Львов хулин-чи Яновски урамра «ирĕксĕрлесе ĕçлеттер-мелли лагерь» организациленĕ. Вăл лагерь йĕри-тавра йĕплĕ пралук карса çавăрăннă. Нимĕçсем унта мирлĕ граждансене тата тыткăна лекнĕ çар çыннисене хăваласа пухнă. Хупса хунă çынсене выçăпа тарăх-тарнă, тÿсме çук йывăр ĕçсем ĕçлеттернĕ. Çав тери хытă хĕненĕ. Тифпа, варвитти чирĕпе юри чирлеттернĕ. Пиншер çын вы-çăпа, тифпа, варвитти чирĕпе чирлесе вил-нĕ, нумайĕшне пере-пере пăрахнă.

«СС гауптштурмфюрерĕ Фриц Гебау-эр хĕрарăмсемпе ачасене пăвса вĕ-лернине, арçынсене хĕлле пичкери шыва лартса шăнтса вĕлернине эпĕ хамах курнă,—тесе пĕлтернĕ Комиссие çав ла-герьте пулнă çын Аш.—Вĕсен алли-урисе-не çыхатчĕç те пичкене чиксе лартатчĕç. Вĕсене унта шăнса ларичченех тытатчĕç». Нимĕç бандичĕсем çынсене вĕлерес тĕлĕш-пе тем те пĕр шухăшласа кăларни халĕ паллă ĕнтĕ. Çак ĕçсене вĕсем хавасланса тунă, вĕсем çапла тунине главнăй çар ко-мандованийĕ тата правительство ырланă. СС гауптштурмфюрерĕ Франц Варцок. çă-махран, хупса хунă çынсене урисенчен юпа çумне çакса яма юратнă, вĕсене вăл ви-личченех çавăн пек тытнă. Оберштурмфю-рер Рокита хупса хунă çынсен хырăмне хăй каса-каса çурнă. Яновски лагерĕн следстви пайĕн начальникĕ Гайне хупса хунă çынсен ÿтне тимĕр е йывăç патакпа чиксе шăтарма юратнă, хĕрарăмсен чĕрни-сене турта-турта кăларнă, çынсене çаппа-çарамаслантарса, çÿçĕсенчен çака-çака янă, вĕсене суллантарса, «куçакан мишень» çи-не пеме юратнă. Лагерь комендантчĕ обер-штурмфюрер Вильгаус, арăмĕпе хĕрне са-вăнтарас тесе, балкон çине тухса, мастер-скойра ĕçлекен çынсене автоматпа пенĕ. Унтан вăл автоматне арăмне панă, арăмĕ те вара çавăн пекех çынсене автоматпа пенĕ. Хăшпĕр чухне, хăйĕн 9 çулхи хĕрне савăнтарас шутпа, Вильгаус 2—4 çулхи ачасене çÿлелле ывăтма хушнă, хăй вара çав ачасене пăшалпа пенĕ. Хĕрĕ унăн хĕ-пĕртенипе алă çупса çапла кăшкăрнă: «Атте, атте татах çапла ту, татах!», тенĕ. Аш-шĕ вара татах пенĕ.

Лагере хупнă çынсене час-часах пĕр сăл-тавсăрах, пĕр-пĕрин умĕнче мухтансах вĕ-лернĕ. Следстви комиссине Р. С. Киршнер свидетель каласа панă тăрăх, гестапо ко-миссарĕ Вепке лагерьти ытти палачсем умĕнче — ачана пĕрре çапсах çурмăран татса пăрахатăп, тесе мухтаннă. Лешсем ăна ĕненмен. Вара вăл урамра 10 çулхи ачана тытнă та, ăна чĕркуççи çине лартса ывăç тупанĕсене пĕрле çыпăçтарса, пуçне пĕшкĕртме хушнă. Унтан çав ачан пĕçне çурмаран хĕçпе касса татнă. Гитлеровец-сем Вепкене çав ĕçшĕн хĕрÿллĕн салам-ланă, ăна мухтанă, унăн аллине çирĕппĕн чăмăртанă.

Нимĕçсем çынсене музыка каланă вă-хăтра асаплантарнă тата вĕлернĕ. Çав шутпа вĕсем хупса лартнă çынсенчен ятар-ласах оркестр организациленĕ. Ăна «вилĕм танги» текен уйрăм кĕвĕ выляттарнă. Лагере пĕтерес умĕн нимĕçсем оркестрта пулнă çынсене пурне те персе пăрахнă.

Яновски лагерьте фашистсем мирлĕ со-вет çыннисене 200.000 ытла персе пăрахнă.

1941 çулхи июль уйăхĕнче нимĕçсен çар командованийĕ тыткăна лекнĕ çар çынни-сем валли Львов хули варринче крепость территорийĕнче «цитадель» ятлă концен-трациллĕ лагерь туса хунă. Персе пăра-хассипе хăратса, нимĕçсем унта хупнă çынсене кунĕн-çĕрĕн ĕçлеттернĕ. Лагере пĕрре те хутса ăшăтман. Хупса хунисенчен вуншар пин çын выçăпа, хĕненипе тата тĕрлĕ чир-чĕрсене пула вилнĕ. Кунсăр пуç-не вĕсене пере-пере пăрахнă. Çав лагерь-те мĕн пурĕ 280.000 çын (тыткăна лекни-сем) пулнă, вĕсенчен выçăпа, чирленипе тата персе вĕлернипе 140.000 çын ытла пĕтнĕ.

Мирлĕ халăха тата тыткăна лекнĕ çын-сене Львов хули тулашĕнчи Лисеницки вăрманта та йышлăн вĕлернĕ. Унта 200.000 çынна ытла персе пăрахнă.

1941 çулхи сентябрь уйăхĕнче Львовра нимĕçсем еврейсем валли «Юденлаг» текен лагерь туса хунă. Вăл лагере хула тула-шĕнче тунă. Лагерь йĕри-тавра хÿме са-вăрнă тата йĕплĕ пралук карса тухнă. Ла-герьтен тухма никама та ирĕк паман. Еçе кайнă чухне те, ĕçрен килнĕ чухне те ла-герьти çынсене хуралласа пынă. Лагерьте мĕн пурĕ 136.000 çын пулнă. Лагерьти пурнăç условийĕсем тÿсме çук йывăр пул-нă—çынсем урайĕнче ним сармасăрах çы-вăрнă. Еврейсене выльăха пăхниччен те япăхрах пăхнă. Нимĕçсем арçынсене те, хĕрарăмсене те, ачасене те шеллемен. Çи-тĕннисене ним сăлтавсăрах вĕлернĕ, ачасе-не гитлерла çамрăксен командисене панă. Лешсем вара вĕсемпе пăшалпа пенĕ çĕрте мишень вырăнне усă курнă. Çав лагерьте 1941 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи июнĕн 6-мĕшне çитиччен 130.000 çынна вĕлернĕ.

Львов облаçĕнчи ытти хуласенче те со-вет çыннисене çавăн пекех йышлăн вĕ-лернĕ.

* * *

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси çакна та паллă тунă: Львов облаçĕнчи ла-герьсене нимĕçсен правительстви Германи-ри концентрациллĕ лагерьсенчен ытти го-сударствăсен мирлĕ гражданĕсене тата тыт-кăна лекнĕ çар çыннисене те иле-иле пы-нă.

Ытти государствăсен тыткăна лекнĕ çар çыннисене нимĕçсем йывăр ĕçсем тутарнă, час-часах хĕненĕ, выçăпа асаплантарнă, юри вĕлерсе пĕтернĕ. Шаранта департа-ментĕнчи Ангулем хула çынни Эмиль Леже француз, 1940 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнче Шампаньре (Франци) тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Тыткăна лекнĕ-лекме-нех манăн нимĕçсен тискер ĕçĕсене кур-малла пулчĕ... Вĕлерессипе хăратса, пире пĕр канмасăр, выçăн-тутлăн ĕçлеттерет-чĕç: эпир çав тери начарланса, вăйсăрланса çитрĕмĕр, пирĕн тумтир те, урана тăхăнмал-ли те çукчĕ, пире пыйтăсем çисе яратчĕç».

Лагерьти йĕркесем çинчен следстви ко-миссине Лооф Клеман çапла каласа панă: «Рава-Русскири тыткăна лекнĕ вырăс çыннисен лагерĕ, ăна акăлчан-сем «вăрах вилĕм» лагерĕ тесе ят панă. Эпĕ унта 1942 çулхи сентяб-рĕн 3-мĕшĕнче çитрĕм. Çав лагерьте 12 пин çын пуçне шыв ĕçмелли пĕр кран пурччĕ. Унпа та талăкра 4—5 сехет хушши кăна усă курма юратчĕ. Нимĕç хуралĕ пире çав тери хăратса пĕтерчĕ. Пĕчĕк айăпшăнах вĕлеретчĕç. Пире шыв ĕçме те чарат-чĕç. Эпир выçă аптăраттăмăр. Хупса хуни-сене хĕлле сивĕ çĕрте усратчĕç. Темпера-тура унта 10—16 тата 20 градус сивĕ та-ран пулнă».

1943 çулхи июнĕн 11-мĕшĕнче лагерьте, свидетельсем каласа панă тăрăх, пĕр вă-хăтрах 10.000 çынна вĕлернĕ.

Нимĕç захватчикĕсем тĕрлĕ халăхсене: вырăссене, украинецсене, еврейсене, по-ляксене, французсене, чехсене тата хăйсен тусĕсем пулнă, анчах гитлерла Германие присяга паман итальянецсене те вĕлерсе пынă.

* * *

Хĕрлĕ Çар ăнăçлăн наступлени туса пы-нине пула тата нимĕçсен фашистла çарĕсем тарнипе хăраса, гитлерла правительствăпа çар командованийĕ хăйсен тискер ĕçĕсене пытарма хăтланнă. Шăтăксенчен чавса кă-ларнă вилĕсене 1.200 çынтан пуçласа 1.600 çынна çити шаршанласа хунă. Вăл вилĕсене вара сăмалапа е бензинпа сапса çунтарса янă. Кĕлне ятарласа тунă аласем-пе аласа тасатнă. Çапла майпа вĕсем ылт-тăн япаласене—ылттăн шăлсене, çĕрĕсене тата сехетсене пухасшăн пулнă. Величкер, Хамайдес свидетельсем кăтартса панă тă-рăх, «Вилĕм бригадинче» çунтарса янă вилĕсен кĕлне аласа, нимĕçсем 110 кило-грамм ылттăн тупнă, ăна вара Германие ăсатнă.

Çынсене вĕлерес, çунтарас тата преступ-ленисене пытарас опыта сармашкăн ни-мĕçсем Львов хулинчи Яновски лагерьте «квалификациллĕ кадрсем» хатĕрлекен шкул уçнă пулнă.

* * *

Львов хулипе Львов облаçĕнче мирлĕ совет гражданĕсене, тыткăна лекнĕ совет çыннисене тата ют çĕршывсен çыннисене массăллăн вĕлерес ĕçре айăплисене Чрез-вычайнăй Государственнăй Комисси па-лăртса хунă. Айăплисем—гитлерла прави-тельство тата унăн рейхсминистрĕ Гимм-лер. Айăплисем—йышлă пысăк та пĕчĕккĕ гитлеровецсем.

Хăйсен тискер ĕçĕсемшĕн вĕсене пурне те хаяр ответ тыттармалла.

МЕДИЦИНА НАУКИСЕН АКАДЕМИЙĔН СЕССИЙĔ ХУПАННА

Декабрĕн 22-мĕшĕнче Мускавра СССР-ти Медицина наукисен академийĕн пĕр-ремĕш сессийĕ хăйĕн ĕçĕсене пĕтернĕ.

Юлашки ларура медицина умĕнче тăра-кан тĕрлĕ ыйтусем тăрăх çак академиксем сăмах тухса каланă: А. В. Палладин, В. П. Осипов, М. О. Малиновский, Ф. Г. Кротков, В. Ф. Зеленин, Н. И. Гразден-ков, В. П. Филатов, Я. О. Парнас, В. В. Парин. Ларура пулнисем Совет Союзĕнчи врачсемпе наука работникĕсене чĕнсе ка-ланă.

Медицина наукисен академийĕн прези-денчĕ Н. М. Бурденко хăйĕн юлашки сă-махне каланă. (ТАСС).

Венгрири Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвĕ

ДЕБРЕЦЕН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС) Паян Венгрире Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвĕ ĕçлеме тытăннă. Вăл пухăва Венгрири об-ществăллă тата политикăллă тĕрлĕ органи-зацисен представителĕсен ушкăнĕ пухнă. Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвĕн историйĕ çап-ла пулнă: декабрь пуçламăшĕнче Дебре-ценра политикăллă тĕрлĕ шухăшлă об-щество деятелĕсем пуçарулла ушкăн орга-низациленĕ. Çав ушкăн председательне Дебрецен хулинчи бургомистра Вашари Иштвана лартнă. Ушкăнăн задачи — де-мократиллĕ никĕс çинче Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвне пухасси пулнă. Çав ушкăн Венгри халăхне Вăхăтлăх Правительство тума пултаракан Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвне делегатсем суйласа яма чĕнсе каланă. Çапла вара, декабрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен Венгрин Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă территорийĕнче Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвне делегатсем суйласа янă.

Халăх Пухăвĕнче мĕн пурĕ 230 делегат пулнă. Вĕсене Венгрин нимĕçсенчен тасат-нă территорийĕнчи хуласемпе ялсенче де-мократиллĕ йĕркепе суйланă. Вĕсем демо-кратиллĕ пур партисен, профессиллĕ со-юзсен, хуласемпе ялсенчи самоуправлени-сен, вырăнти комитетсен, хресчен союзĕ-сен, промысла асоциацийĕсен тата об-ществăллă ытти организацисен представи-телĕсем пулса тăраççĕ.

Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвне реформаци колледжĕн çуртĕнче Венгрин наци гимн-не каласа уçнă. 1849 çулта çак çуртра, халăх ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăмăн çулпу-çĕ Кошут Венгри никама пăхăнманни çин-чен пирвайхи хут пĕлтернĕ. Пуху пыракан çуртăн тăррине Венгрин наци ялавĕ вĕл-кĕшсе тăнă.

Пĕрремĕш ларăва пуçарулла ушкăн пред-седателĕ Вашари доктор уçнă. Ертсе пы-ракан органсене суйлама тăратнă кандида-турăсем пирки сÿтсе-явнă хыççăн Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвĕн председателĕ пулма Мишкольц хулинчи юридически академи профессорне Жедени Белана суйласа лартнă. Председатель заместителĕсем пулма Дебрецен университечĕн профессорне Шан-та Кальмана тата реформаци чиркĕвĕн паллă деятельне Юхас-Надь Шандор док-тора суйланă. Пуху председателĕ Жедени Бела профессор малтан кĕске сăмах кала-нă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвĕ демократиллĕ çĕнĕ Венгри тăвас-син никĕсне хумалли çинчен каланă. Çавăн хыççăн Сегед хули делегачĕ католиксен священникĕ Балог Венгри халăхне чĕнсе калама сĕннĕ. Пуху делегачĕсем çав чĕн-се каланине сÿтсе-явас ĕçе активлăн хут-шăннă. Вĕсем нимĕçсемпе Салашин пука-нелле правительствине хирĕç пыракан кĕ-решĕве хутшăнтармашкăн çĕршыври демо-кратиллĕ вăйсене пĕрлештерме кирлине кăтартса панă. Пуху делегачĕ Миклош Бе-ла генерал-полковник хăйĕн сăмахĕнче ни-мĕçсемпе вĕсен тарçисене хирĕç хастарлăн кĕрешме чĕннĕ. Делегатсенчен чылайĕшĕ Венгрин, гитлерла Германие хирĕç пыра-кан вăрçа хутшăнса, пĕрлешÿллĕ нацисем умĕнче хăйĕн айăпне пăртак та пулин чакарма кирли çинчен каласа панă. Çĕр-шыв экономикине аталантарса, Венгри де-мократин никĕсĕсене çирĕплетес шутпа Венгрире çĕр тытса тăрас йĕркене улăш-тарма кирли çинчен нумай делегатсем тух-са каланă.

Сÿтсе-явнă хыççăн Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвĕ нумайччен алă çупса, Венгри ха-лăхне чĕнсе каланине йышăннă.

Çакănпа наци пухăвĕн пĕрремĕш ларăвĕ вĕçленнĕ.

Венгрире Халăхăн Вăхăтлăх Правительствине туса хунă

ДЕБРЕЦЕН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвĕ хăйĕн ĕçне малалла туса пынă. Ларура Халăхăн Вăхăтлăх Правительствине тăвас ыйтăва пăхса тухнă. Ятарласа уйăрнă политикăллă комисси сĕннипе пуху Халăхăн Вăхăтлăх Правительствине туса хума Миклош Бела генерал-полковнике хушнă. Перерыв хыç-çăн Миклош Бела генерал-полковник Ха-лăхăн Вăхăтлăх Пухăвне вăл туса хунă çĕнĕ правительствăна çирĕплетме тăратнă. Тĕплĕн сÿтсе-явнă хыççăн Пуху прави-тельство составне çирĕплетнĕ.

Правительство составне Венгри çарĕн Германие хирĕç хастарлăн кĕрешме шут тытнă паллă представителĕсем, обществă-па наукăн пархире тăман деятелĕсем, пар-ламент депутачĕсем пулнă çынсем, çавăн пекех тата Венгрин демократиллĕ предста-вителĕсем: вак çĕр хуçисен независимăй партийĕн, хресченсен партийĕн, социал-демократсен тата коммунистсен предста-вителĕсем кĕнĕ.

Халăхăн Вăхăтлăх Правительствин çак составне çирĕплетнĕ: премьер-министр — Миклош Бела генерал-полковник, ют çĕр-шыв ĕçĕсен министрĕ—Дьендеши Янош доктор, шалти ĕçсен министрĕ—Эрдей Фе-ренц доктор, оборона министрĕ—Вереш Янош генерал-полковник, финанс министрĕ —Вашари Иштван доктор, çĕрĕç министрĕ —Надь Имре господин, промышленность министрĕ—Такач Ференц господин, суту-илÿ министрĕ—Габор Иожеф, çутĕç тата тĕн министрĕ—граф Телеки Геза профес-сор, юстици министрĕ—Велентини Агоштон доктор, снабжени министрĕ—Фараго Га-бор господин, социальнăй обеспечени ми-нистрĕ—Мольнар Эрик.

Правительство составне çирĕплетнĕ хыç-çăн премьер-министрпа правительствăн ыт-ти членĕсем, авалтан пыракан йĕрке тă-рăх, Венгри халăхне пăхăнса тăма, Халă-хăн Вăхăтлăх Пухăвĕн йышăнăвĕсене пур-нăçа кĕртсе пыма, государство вăрттăнлăх-не упрама тата хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пыма сăмах панă.

Çакăн хыççăн премьер-министр Халăхăн Вăхăтлăх Правительствин декларацине ву-ласа панă. Делегатсем сÿтсе-явнă хыççăн Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвĕ вăл декларацие тăвăллăн алă çупса ырланă. Çакăнпа пуху хăйĕн ĕçне пĕтернĕ. Лару вĕçĕнче Венгрин наци гимнне каласа панă.

Аялтарахра правительство декларацин текстне пичетлетпĕр.

Венгри Халăхĕн Вăхăтлăх Правительствин декларацийĕ

Пирĕн тăван çĕршыв йывăр кунсем пу-рăнса ирттерет. Гитлерла Германипе тунă çар союзĕ Венгрие нимĕç империалисчĕсем Совет Союзне хирĕç тата ирĕклĕхе юрата-кан демократиллĕ ытти халăхсене хирĕç тăвакан вăрçа хутшăнтарчĕ. Мохач катас-трофи хыççăн çĕршыв çакăн пек япăла курман. Пирĕн государствăн тĕп никĕсĕсем хавшаса кайнă. Нацистсен тарçине Сала-шине пула, Венгри пĕтĕм тĕнче курайман Гитлерăн юлашки союзникĕ пулса юлать.

Пирĕн çĕршывăн регентне Миклош Хор-тие нимĕçсем тытса илнĕ. Гитлерăн Венгрири тарçисем, çĕршыва пĕтесси патне илсе çитернĕскерсем, хăйсе-не Венгри «правительстви» тесе шут-лаканскерсем, чăннипе илсен узурпатор-сем (влаçа законсăр тытса илнĕ çынсем) пулса тăраççĕ. Германипе союзлă пулни тата ун майлă вăрçни пирĕн çĕршыва пĕ-тес патне илсе çитернĕ вăхăтра власть çи-рĕп алăра пулмаллаччĕ, анчах шăп çак вăхăтра пирĕн çĕршыв правительствăсăр тăрса юлчĕ. Çак тарăн йывăрлăха пула, Венгрин чăн-чăн патриочĕсем, мĕнле парти-ре тăнине пăхмасăр, çĕршыва çăлас тесе пĕрлешме шутларĕç. Халăхăн çак пĕрле-хĕнчен ĕнтĕ Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвĕ çуралса тухрĕ те. Вăл пухăва демократи йĕркипе суйланă, ăна хуласемпе ялсенчи самоуправленисенчен, хресченсен союзĕ-сенчен, профессиллĕ союзсенчен, промыш-ленность, суту-илÿ тата промысла асо-циацийĕсенчен, кооператив обществисенчен, культурăпа обществăн ытти организацийĕ-сенчен делегатсем суйласа ярса йĕркеле-нĕ. Халăхăн Вăхăтлăх Пухăвĕ Венгри ха-лăхĕн законлă суйланă пĕртен пĕр органĕ пулса тăрать, вăл Халăхăн Вăхăтлăх Пра-вительствине туса хучĕ.

Ракоципе Кошутăн патриотла аслă тра-дицийĕсене асра тытса, Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви нимĕç пусмăрçисемпе тытнă çыхăнăва, темиçе çĕр çул хушшинче çĕр-шыва чуралăхра тытнăскерсемпе яланлăхах сыхăну татать. Германипе союзлă пулни пĕр ăру ĕмĕрĕнчех иккĕмĕш хут ĕнтĕ пи-рĕн çĕршыва вăрçăра поражени тÿстерчĕ, пĕтсе ларас патне илсе çитерчĕ. Венгри халăхĕн кăмăлне курса, Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви Совет Союзĕпе тата ирĕк-лĕхе юратакан ытти çĕршывсемпе васка-сах перемири тума тăрăшать. Халăхăн Вă-хăтлăх Правительстви Венгри Совет Союзне тата кÿршĕри ытти халăхсене хи-рĕç вăрçнине пула тунă сиене тÿлесе тат-ма пулать. Халăхăн Вăхăтлăх Правитель-стви кÿршĕри пур демократиллĕ çĕршыв-семпе те, çавăн пекех тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе тата Великобри-танипе лайăх килĕштерсе ĕçлеме пулать. Нимĕç пусмăрĕнчен хăтарса ирĕклĕх пара-кан аслă Совет Союзĕпе вара туслăн пу-рăнма пулать. Халăх интересĕсем çакна тума хушаççĕ. Венгри халăхĕн хĕçпăшал-лă вăйĕсем, Совет Союзĕн çарĕсемпе та-та демократиллĕ ытти халăхсемпе пĕрле гитлеризма пĕтерме пулăшмалла, çапла ту-нипе вара Венгрин Совет Союзĕпе ирĕклĕхе юратакан ытти нацисем умĕнчи айăпне пăртак та пулин чакармалла.

Венгри халăхĕн пĕтĕм вăйне тата пĕтĕм хатĕрĕсене халăх курайман нимĕç пусмăр-çисене хирĕç тата вĕсен хунгаристла хÿ-решкисене хирĕç мобилизацилессине Ха-лăхăн Вăхăтлăх Правительстви хăйĕн чи пысăк задачи тесе шутлать. Çĕршыва çав-сем ĕнтĕ пĕтерсе хурасси патне илсе çи-терчĕç. Çĕршывăн Хĕрлĕ Çар ирĕке кăлар-нă пайĕнче те, халĕ нимĕç пусмăрĕнче тă-ракан пайĕнче те Халăхăн Вăхăтлăх Пра-вительстви халăха пĕтĕçтерсе унăн кĕре-шĕвне ертсе пырать. Çав кĕрешÿ, нимĕç пусмăрçисене çĕршывран хăваласа кăларса, вăйлă, никама пăхăнман, демократиллĕ Венгри туса хурасси патне илсе пымалла.

Венгрире демократиллĕ улшăнусем тă-васси Венгри халăхне ирĕке кăлармалли тата пирĕн государствăна çĕнĕрен никама пăхăнман государство туса хумалли чи кирлĕ услови пулса тăрать. Çав шутпа ĕнтĕ Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви ха-лăха хирĕç пыракан законсемпе декретсе-не, çавăн пекех тата еврейсене хирĕç кă-ларнă тискер распоряженисене пурне те пăрахăçа кăларать. Вăл демократиллĕ пра-вăсемпе ирĕклĕхсем парать: сăмах ирĕк-лĕхĕ, пичет ирĕклĕхĕ, пухусемпе органи-зацисен ирĕклĕхĕ, тĕн ирĕклĕхĕ, çавăн пе-кех тата пĕтĕмĕшле, пĕртан, тÿрремĕн та-та вăрттăн сасăласа суйлас право парать. Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви «Хĕрес-летнĕ çĕмрен» организацине, халăха хирĕç пыракан ытти организацисене те салатса ярать; общество пурнăçĕнчен, культурă-ран, пичетрен, шкулсенчен тата ыттисен-чен те расăсем пĕр-пĕрне кураймасăр пурă-нас идеологие тата нацисем пĕр-пĕрне тÿ-сейменнине тăпăлтарса кăларать. Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви государство ор-ганĕсенчен хунгаристсене тата нимĕçсем майлă ĕçленĕ ытти элементсене те тасат-са кăларать, çĕршыва сутакансене ответ тыттарать, демократиллĕ никĕс çинче çĕ-нĕрен администрациллĕ аппарат туса ху-рать тата ялсенчи, хуласенчи самоуправ-ление çĕнĕрен ура çине тăратать.

Нимĕç пусмăрçисене хирĕç кĕрешес тесе тата тăван çĕршыва ирĕке кăларассине хă-вăртлатас шутпа Халăхăн Вăхăтлăх Пра-вительстви халăхăн хĕçпăшаллă вăйĕсене çĕнĕрен туса хурать. Çав вăйсем Венгрин никама пăхăнманлăхне тата государство суверенитетне упрама пулăшĕç.

Çĕршыва экономика тĕлĕшĕнчен ура çине тăратас тесе, хресченсен тахçан авалхи ĕмĕтне пурнăçлас тесе, Венгри демокра-тийĕн никĕсне çирĕплетес тесе, Прави-тельство çĕр тытса тăрас йĕркене халех улăштарать, çĕрсĕр тăрса юлнă тата са-хал çĕр тытакан темиçе çĕр пин хресчене çĕр валеçсе парса, вĕсене хуçалăх тытса тăракансем туса хурать. Хресченсене çĕр валеççе панă чухне пуринчен малтан çĕр-шыва сутнă çынсенчен, «Фольксбунд» чле-нĕсенчен тата нимĕç çарĕнче пулнă çын-сенчен тытса илнĕ çĕрсемпе усă курать. Нимĕçсене хирĕç тата вĕсен «Хĕреслетнĕ çĕмрен» ятлă организацири хÿрешкисене хирĕç алла хĕçпăшал тытса кĕрешекенсене çĕр чи малтан валеççе параççĕ.

Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви Вен-грин ялхуçалăхне нимĕç интересĕсемшĕн çаратма тунă мерăсене пурне те пăрахăçа кăларать. Ялхуçалăхне аталантарма госу-дарство кивçен укçа парать тата ытти майсемпе те пулăшать.

Çĕршыва нимĕçсем çаратса хăварнă йы-вăр условисене пăхмасăрах, Халăхăн Вă-хăтлăх Правительстви халăх пурнăçне ла-йăхлатас тĕлĕшпе хăйĕнчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăвать. Рабочисемпе служащисен ĕç укçине нимĕçсен интересĕсемшĕн çав тери чакарнă пулнă, ăна ÿстермешкĕн со-циальнăй страховани кассисен самоуправ-ленине çĕнĕрен хута ярать, çавăн пекех тата ĕçе сыхламалли законсене, вăрçă вă-хăтĕнче пăрахăçа кăларнăскерсене, çĕнĕрен пурнăçа кĕртет, ĕç пирки çĕнĕ законсем кăларать.

Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви çапла пĕлтерет: çĕршыври экономика пурнăçĕпе общество стройĕн никĕсĕ—уйрăм харпăр-лăх пулса тăрать, çав харпăрлăха государ-ство хÿтĕлесе тăма сăмах парать. Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви суту-илÿпе про-мышленноçра уйрăм çынсен пуçарулăхне, çавăн пекех тата вак промышленноçпа су-ту-илĕве аталантарма пулăшать. Экономи-ка тĕлĕшпе çĕршывăн никама пăхăнман-лăхне çирĕплетес тата вăрçă вăхăтĕнче аркатнине хăвăртрах юсаса çитерес шутпа промышленноçпа суту-илĕве вăйлăн ата-лантаракан политикăна тытса пыма пу-лать. Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви, общество тăкакĕсене саплас ĕçе халăхăн тĕрлĕ сийĕсем пурте тивĕçлипе хутшăнч-чăр тесе, налога кам мĕн чухлĕ тупăш илнине кура пухмалла тăвать.

* * *

Нацин Вăхăтлăх Правительстви Венгри-ре халăх ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕвĕн организаторĕпе ăна ертсе пыраканĕ пулса тăрать. Вăл пĕтĕм Венгри халăхне, Вен-грин кашни патриотне хамăр халăхшăн йы-вăр килнĕ çак вăхăтра хăйĕн çĕршыв умĕнчи тивĕçне пурнăçа кĕртме, нимĕç пусмăрçисене хирĕç ирĕклĕх кĕрешĕвĕн-че хăйне шеллемесĕр çапăçма чĕнет. Çĕр-шыва çăлас тĕлĕшпе Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви тăвакан ĕçсене пулăшма чĕнет. Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви уйрăмăнах нимĕç пусмăрçисем енче çапă-çакан çарсене, Гитлер хÿрешкисем улта-ланă офицерсемпе салтаксене хĕçпăшала нимĕçсене хирĕç çавăрса тăратма, пĕрле-шÿллĕ вăйпа нимĕç хÿрешкисен пукачелле правительствине сирпĕтсе яма, çĕршыва ирĕке кăларассине хăвăртлатма чĕнет. Пĕр çын та нимĕçсен енче ан юлтăр. Кам та кам нимĕçсене хирĕç хĕçпăшалпа тăма пултараймасть, вăл пирĕн енне каçтăр. Вĕсем уйрăм чаçсемпе, подразделенисемпе; ушкăнсемпе йĕркеленсе е пĕрерĕн-пĕрерĕн пирĕн пата килччĕр! Çĕршывăн нимĕçсем оккупациленĕ пайĕнче халăхăн нимĕç пус-вăрçисемпе вĕсен тарçисене нимĕнле пулă-шу та памалла мар. Салашин законсăр правительстви тăвакан ĕçсене чăрмантар-са, вăл çар производствине ĕçлеттерме хăтланнине тата транспорт ĕçне чарса лартмалла, ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕве хутшăнма хĕçпăшаллă партизансен отря-чĕсем туса хумалла.

Халăхăн Вăхăтлăх Правительстви ертсе пыракан Венгри халăхĕн нимĕçсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕ тата çĕршыва демокра-тизацилени хамăр çĕршыва çĕнĕрен ата-лантармалли çула уçса парĕ, пирĕн çĕршы-ва ирĕклĕхе юратакан çĕршывсен çемьине хутшăнтарĕ, вăйлă, никама пăхăнман ирĕк-лĕ Венгрин никĕсне хурĕ.

АМЕРИКĂПА АНГЛИ ÇАРĔСЕНЕ ÇЫНСЕМ ПУХАССИ ÛСЕТ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). США çар министерстви январьпе февраль уйăхĕсенче çара кашни уйăхрах 60.000 çынтан пуçласа 80.000 çынна çити ÿстерсе илесси çинчен пĕлтернĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, прави-тельство ĕнер çывăхри уйăхсенче фронта салтаксен çĕнĕ йышне яма шутлани çин-чен пĕлтернĕ. Мобилизацилекен çынсен шучĕ малтан паллă туса хунинчен 250.000 çын ытла пулмалла.

РУМЫНИ ПЕРЕМИРИ УСЛОВИЙĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАНИ

БУХАРЕСТ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Перемири çинчен тунă килĕшĕве пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен комисси распоря-жени пичетлесе кăларнă. Вăл распоряже-ни тăрăх, «Румынипе Пĕрлешÿллĕ Нацисем пĕр-пĕринпе лайăх çыхăнса тăнине сиенле-леме пултаракан» пур кĕнекесене те пухса илмелле. Çавăн йышши кĕнекесем тата тĕрлĕ хутсем тытакан мĕнпур издательст-вăсене, типографисене, кĕнеке магазинĕсе-не тата учрежденисемпе предприятисене çав япаласене влаçсен аллине пама хушнă.

Çавăн пекех комисси Совет Союзне хи-рĕç вăрçнăшăн панă медальсене пурне те каялла пухмалли çинчен пĕлтернĕ.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен пĕлтер-нĕ тăрăх, декабрĕн 22-мĕшĕнче каçхине ЭЛАС («Халăхăн ирĕклĕх фрончĕ» çар ор-ганизацийĕ) пуçлăхĕсем Скоби генерала хăйсен ответне панă.

Вăл ответа официальнăй йĕркепе пĕл-термен пулин те, унта çакăн пек тăватă пункт пур пулĕ теççĕ: ЭЛАС хăйĕн çарĕ-сене Аттикăран кăларса кайма килĕшет; Пирейпе Афины хули районĕнче ЭЛАС майлисене хĕçпăшалсăрлантарасси çинчен Скоби генерал ыйтнипе килĕшет; çав ĕçе акăлчансемпе грексен пĕрлешÿллĕ комис-сийĕ тишкĕрсе тăнипе тумалла; çавăн пе-кех тата ЭЛАС халăх пĕрлĕхĕн çĕнĕ пра-вительствине туса хума ыйтать. Рейтер агентстви каланă тăрăх, ЭЛАС вăхăтра ответ паманни Скоби генерал кăларса тă-ратнă пĕрремĕш услови тăрăх, ЭЛАС штаб-не Афины хулинчен кăларса кайниччен килнĕ пуль, теççĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ хăйĕн опера-тивнăй сводкинче паян Афины хулинче иртнĕ талăкра паллă улшăнусемех пулман, тесе пĕлтерет. Пирейре Англи çарĕсем тĕ-реклетнĕ чылай пунктсене тытса илнĕ, вĕ-сен шутĕнче чугун çул станцийĕ пур. Эпирте ЭЛАС çарĕсем (ЭЛАС—«Халăхăн ирĕклĕх фрончĕ» çар организацийĕ) Зер-вас полковникăн çарĕсене (çак çарсем Гре-цин хальхи правительстви майлă çапăçаç-çĕ) хĕссе, малалла куçса пыраççĕ. Зервас çарĕсем Янинăпа Артăран тухса кайнă. Грецин ытти районĕсенче улшăнусем çук.

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен çапла пĕлтерет: ЭЛАС çарĕсем Эпирта Зервас полковникăн хĕçпăшаллă вăйĕсем йышăнса тăнă территорие пĕтĕмпех тытса илнĕ. Юлашки пĕлтерÿсем тăрăх, Зервас Янинă-па Превезăран тухса кайнă. Зервас çарĕ-сем пысăк çухатусем тÿсеççĕ тата çартан массăллăн тарнипе пысăк сиен кураççĕ.

Британи çарĕсем паянхи куна Афины хулине çурринче яхăн йышăннă. Хулан кăн-тăр пайĕнче ЭЛАС чаçĕсем хирĕç тăма пăрахнă, анчах та Афины хулин çурçĕр пайĕнче хăйсен позицийĕсене вĕсем çирĕп-пĕн тытса тăраççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Папандреу правительстви ЭДЕС (Зервас ертсе пыракан çарсен) отрядне хĕçпăшал-сăрлатма акăлчансен çар влаçĕсем панă распоряжение шута илмест. Папандреу паян акăлчансен хĕçпăшалсăрланма хуш-нине пурнăçа кĕртменшĕн ЭДЕСА мухта-нă. Наступлени туса пыракан ЭЛАС çарĕ-сене хирĕç вăрçма Зервас Британи влаçĕ-сенчен пулăшу ыйтнă. ЭЛАС çарĕ-сем ЭДЕС çарĕсене çурçĕр-хĕвеланăç Гре-цин сăртлă районĕсене хăваласа янă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верхов-нăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кă-ларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Моншау секторĕнче нимĕнле паллă ул-шăну та пулман. Маршран çурçĕр-хĕвел-тухăçнерехри районра тăшман çарĕсем От-тонран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри çула тат-нă. Оттон хули халĕ те союзниксен аллин-чех, анчах тăшман союзниксен çарĕсене хирĕç Оттонпа Суа хулисем хушшинчи çултан кăнтăртарахра вăйлă çапăçать (Суа хули Оттонран 3 миля çурçĕр-хĕвелтухăç-нерехре). Çак участокран кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Бастоньрен 6 миля кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри Морэ патне çит-нĕ. Маршран çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем тăшманăн хĕсĕвне кĕнĕ çарĕсен кăнтăр флангĕсенче малалла куçнă.

Саар улăхĕнче союзниксен çарĕсем Саар-лаутернран кăнтăртарахра Саар шывĕ урлă каçнă, тăшман пехотин контратакине сирсе янă. Виссенбургран хĕвелтухăçне-рехре тăшман тупăсемпе минометсенчен вăйлă персе тăнă. Темиçе сехет хушшинче Берг хули еннелле 1.000 снаряд кăларса янă.

Союзниксен çарĕсем Вогез районĕнче, Кольмартан хĕвеланăçнерехре, пăртак ма-лалла кайнă.

Çанталăк лайăхланнă пирки декабрĕн 23-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ пысăк ĕçсем тума пуçланă. Самолетсен питех те пысăк соединенийĕсем тăшман контрнас-туплени туса пыракан районра тата унăн тылĕнче автотранспорт çине, танксем çине, чугун çул составĕсем çине, çар чаçĕсем çине, тăшманăн артиллери батарейисем çи-не, çулйĕрсен центрĕсем çине тата ытти объектсем çине те питĕ нумай бомба пă-рахнă. Çак операцисене тунă вăхăтра сыв-лăшра нумай çапăçусем пулса иртнĕ. Тăш-манăн 137 самолетне персе ÿкернĕ тата çĕр çинче унăн 9 машинине пĕтернĕ. Союзниксен 73 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри хăйсен базисенчен инçери вырăнсене анса ларнă пуль, теççĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕç-пăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче çап-ла каланă: Итали фронтĕнче 8-мĕш армин чаçĕсем Сенио шывĕ тăрăхĕнчи позицисен икĕ енĕпе те малалла куçса пынă. Фаэн-цăран çурçĕртерехре Ламоне тата Сенио шывĕсем хушшинче те малалла куçса пы-раççĕ. Çакăнтан хĕвеланăçнерехре союз-никсен çарĕсем, тăшман контратакине сир-се ярса, Делла Вольпе ятлă çÿллĕ вы-рăна йышăнса илнĕ. 5-мĕш арми секто-рĕнче разведчиксем çеç шыраса çÿренĕ.

Юлашки 11 кун хушшинче союзниксен çар карапĕсем Кăнтăр Францири союзник-сен çарĕсен сылтăм енчи флангне тинĕсрен çирĕппĕн пулăшса тăнă. Америка эсминец-сем тата Францин «Жанна Д'Арк» крей-серĕ Францие Итали чиккинчи тинĕс хĕр-ринче тăшман батарейисене, çарĕсене, мо-торизациленĕ транспортне тата чугун çул станцийĕсемпе кĕперĕсене ăнăçлăн персе тăнă.

АМЕРИКĂН 3.000 САМОЛЕЧĔ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИРИ ÇАР ОБЪЕКЧĔСЕНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, амери-канецсен 2.000 ытла йывăр бомбардиров-щикĕ, 900 истребитель хÿтĕлесе пынипе, тăшманăн Хĕвеланăç Германире куçса пы-ракан çарĕсен тылĕнчи çулйĕрĕсемпе снаб-жени центрĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Франкфурт районĕнчи тата Хĕвеланăç Гер-манири ытти çар объекчĕсене те тапаннă.

Акăлчансен бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Рур облаçĕнчи икĕ аэродрома вăйлăн тапаннă.

БАВАРИРЕ ПĂЛХАНУСЕМ ПУЛНИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ХЫПАРСЕМ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонтиднинген» хаçат пĕлтер-нĕ тăрăх, декабрĕн 19-мĕшĕнче каçхине Баварире массăллă пăлханусем пулни çин-чен калакан хыпарсем Берлина çитнĕ. Вăл пăлханусем фольксштурмăн Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçнă Бавари батальонĕсем пысăк çухатусем тÿснине пула пуçланнă, теççĕ. Пăлханусем çинчен калакан тĕплĕ хыпарсемех çук пулин те, Баварин нумай вырăнĕсенче юн юхтарса çапăçнисем пул-нă. Çак хыпарсене официальнăй йĕркепе сирсе яраççĕ пулин те, Мюнхенри (Бава-рин тĕп хули) радиостанци темиçе сехет хушши ĕçлеменнине влаçсем хăйсем те йышăнаççĕ.

БЕЛЬГИ ПАРЛАМЕНЧĔ БЕЛЬГИН ÇАР ПРОМЫШЛЕННОÇНЕ НАЦИОНАЛИЗАЦИЛЕМЕ ЙЫШĂННА

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Брюссельрен пĕлтернĕ тăрăх, Брюссельри радио çакăн çинчен пĕлтернĕ: Бельгири депутатсен палати нумай сасăпа çар хатĕрĕсем тăвакан про-мышленноçа национализацилеме йышăннă.

РУМЫНИ МИНИСТРНЕ ВĔЛЕРМЕ ТАПАННИ

БУХАРЕСТ, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: декабрĕн 19-мĕшĕнче каçхине «Атепей палас» ятлă гостиницăра Румынин министрсен совечĕн вице-председательне Петр Грозана вĕлерме тапаннă. Вĕлерме тапаннисене тытнă. Вĕ-сем Ботошанири помещиксем Константин Пилат тата Микулеску пулнă. Гроза Ру-мынин паллă деятелĕ шутланать. Хăй ерт-се пыракан çĕрĕç фрончĕпе пĕрле нацин демократиллĕ фронтне кĕнĕ хыççăн Гроза çĕрĕç реформине пурнăçа кĕртессишĕн активлăн кĕрешет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти энергетика техникумĕнче техникум курсĕшĕн экстернат йĕркипе эк-замен пама юрать.

Экзаменсене çак специальноçсемпе па-малла: а) ЦЭС-сенчи дизель установкисем, б) ЦЭС-ăн теплотехника пайĕ, в) çурт-йĕрсемпе усă курасси.

Экстернат йĕркипе экзамен пама вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене тата производствăра çав специальноçпа икĕ çултан кая мар ĕçленисене пурне те йышăнаççĕ.

Заявленисене çак адреспа памалла: гор. Чебоксары, ул. Плеханова, 7. Заявлени-семпе пĕрле çак документсене ямалла: а) миçе çул вĕреннине кăтартакан свиде-тельство, б) кадрсене учета илмелли лис-ток, в) икĕ фотоÿкерчĕк.

Заявленисене çулталăкĕпех йышăнаççĕ. 3—3.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04285. Типография № 1, Управления полиграфпро[illegible] при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.